Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Зотова Галина Вячеславовна**

**Книга: Ылтăнту**

# Сказка: Капăр канфет

Пĕр лавккара çăкăр, пĕремĕк тата канфет тĕл пулчĕç тет.

– Эпĕ пуринчен те чиперри, – мухтанать канфет. – Пăхăр-ха ман çине, епле хитре ман кĕпе, йăлтăр-ялтăр çиçсе çеç тăрать. Эпĕ тата пуринчен те тутли! – тет.

– Эпĕ те тутлă, – сăмах хушмасăр чăтаймасть тет çăкăр. – Мана тин çеç кăмакаран пĕçерсе кăларнă.

– Эпĕ те тутлă, – тет пĕремĕк те.

– Эпĕ пур пĕр кунта чи тутли, чи чиперри те чи хакли!.. – хăйĕннех перет канфет.

Çапла чылай тавлашаççĕ вĕсем, вĕçне-хĕрне тухаймаççĕ.

Ирхине лавккана пĕр кинемей килсе çăкăр туянчĕ тет.

– Куртăн-и, – тĕксе илчĕ тет çăкăр пылак çимĕçе, – эпĕ пуринчен те тутлăрах пултăм, çавăнпа илчĕ те мана кинемей, – терĕ тет.

Кăшт тăрсан лавккана хĕр ача кĕчĕ тет те:

– Мана кукамай пĕремĕк илсе килме хушрĕ, – тесе пĕр хутаç пĕремĕк туянса кайрĕ тет.

– Эпĕ те санран тутлă пултăм, – тесе кӳрентерсе хăварчĕ тет пĕремĕк канфета.

Канфет вара:

– Нимĕн те ăнланаймастăп, эпĕ кунта чи чиперри, чи пылакки те чи тутли. Çитменнине тата, чи хакли, çапах мана туянакан çук, – тесе тĕлĕнет тет.

Выртать-выртать тет çапла канфет лавккара, хăйне хаклăран çынсем туянма пултарайманнине ниепле те ăнланаймасть тет.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.